Çĕнĕ çул умĕнхи интервью

Çитĕнӳ çулĕпе пĕрлех утасчĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Халăхăн пурнăç шайĕ мĕнле пулни потребительсен таварĕсене мĕн чухлĕ сутнинчен те уççăнах курăнать. Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш планне пĕлтĕр пĕтĕмпе 327 миллион тенкĕлĕх пурнăçланă. Тавар çаврăнăш Муркаш райповĕпе 21 процент, Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 23 процент чухлĕ хăпарчĕ.

Халăха тӳлевлĕ пулăшусем парасси те 20 процент чухлĕ хăпарчĕ: 66,5 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах "Чувашсетьгаз" (57 процент) филиалĕ, "Моргаушрайбыт" (49 процент), пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕ (16 процент) ăнăçлă ĕçленине палăртмалла.

2006 çулта инженери тата социаллă инфраструктура объекчĕсене малалла турăмăр.Çакна валли 321 миллион тенкĕ инвестициппе усă куртăмăр. Муркашри Парк урамĕнчи çурта малалла турăмăр. Çитес çулта ку ĕçе вĕçлемелле. Çак урамрах тепĕр çĕнĕ çурт никĕсне хывса хăвартăмăр. Москакассинче 36 хваттерлĕ çурт тума пуçланă. Пурĕ иртнĕ çул 24 пин тăваткал метр çурт-йĕр тунă.

Пĕтĕмпе 9 ял патне çити асфальт çул сартăмăр, 3 ялта обществăлла центр патне çити çул турăмăр. Çапла майпа 9,9 километр çĕнĕ çул тунă. Çул юсассипе те ĕçсем япăх мар пычĕç. Тивĕш шкулĕ патне çити 800 метр, Муркаш – Москакасси çула 9 километр чухлĕ юсаса пĕтернĕ тата ытти те. Уйкас Янасалта пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ уçалчĕ, пĕтĕмпе вĕсен йышĕ 6 çитрĕ. Тепĕр 8 тĕслĕх библиотека хушăнчĕ, вĕсем 16 çитрĕç. Вомпăкассинче пĕр харăсах клуб, библиотека, фельдшерпа акушер пункчĕ уçалчĕ. Уйрăм çынсен çурчĕсене, социаллă сфера объекчĕсене газ кĕртнĕ.

Иртнĕ çул районта пурăнакансене хваттерсемпе тивĕçтерессипе, çурт çавăрма пулăшассипе те япăх мар ĕçлерĕмĕр. Ипотека кредичĕпе 5 çемье хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатрĕ. Пурĕ 800 пин тенкĕ уйăрнă çакна валли.

Районти 25 çамрăк çемье 11148, 94 пин тенкĕлĕх кредит илчĕ, хваттерлĕ пулчĕ. Республика бюджетĕнчен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 22 çамрăк çемье 1486,846 пин тенкĕлĕх тавăрса памалла мар субсидие илчĕ.

"Яла 2010 çулччен аталантарасси" программăпа килĕшӳллĕн ялта пурăнакан 8 çемье тата 15 çамрăк çемьепе специалист субсиди илчĕ. Ялта çурт çавăрма паракан патшалăх пулăшăвне панине çирĕплетекен свидетельствăна 13 çамрăк çемье 1768,86 пин тенкĕлĕх, ялта ĕçлекен 8 çемье 901 пин тенкĕлĕх илчĕ.

Унсăр пуçне вырăнти бюджетран 2601,7 пин тенкĕлĕх çурт тума е хваттер илме укçа уйăрнă. Çавăн пекех "Ветерансем çинчен" саккунпа килĕшӳллĕн 2 тата ЧР "Çурт-йĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен" Саккунĕпе килĕшӳллĕн социаллă найм килĕшĕвĕпе 1 хваттер панă.

Иртнĕ çул çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче те палăрмалă ĕçсем пулчĕç. Муркашри тасатмалли сооружение туса пĕтертĕмĕр. Республика бюджетĕнчен 18 миллион тенкĕ ытла укçа кайрĕ унта. 4 çуртра шыв пăрăхне, Ярославкăра ăшă трассине улăштарнă т. ыт. те.

Иртнĕ çул çавăн пекех ветерансемпе инвалидсене, халăхăн социаллă пулăшу кирлĕ ытти сийĕсене пулăшу парассипе те тимлерĕмĕр. Федераллă саккунсемпе тата РФ, ЧР ытти нормативлă акчĕсемпе килĕшӳллĕн çамăллăхсемпе тата пособисемпе, пенси укçипе вăхăтра тивĕçтернĕ. Районта ачасем ытларах çурални те районта демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру лайăхланасса шантарать. Ĕçсĕррисен йышĕ те чаксах пырать.

2007 çул бюджетне, районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн прогнозне йышăннă ĕнтĕ. Апла пулсан, кăçал пĕлтĕрхинчен тăрăшарах ĕçлемелли çеç юлать.

– 2006 çула Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ тесе палăртнăччĕ. Ку енĕпе мĕнле ĕçсем туса ирттерме май килчĕ районта?

– Çулталăк пуçламăшĕнче Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкне ирттерме ятарлă Канаш туса хутăмăр, унăн ĕç планне йышăнтамăр. Асăннă Канаш 3 лару ирттерчĕ, çулталăк вара Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче Чăваш амăшне халаллана палăка уçнинчен пуçланчĕ. Пурнăçра йăлтах аннерен пуçланатьçке. Çын ăс-хакăлпа пуян пуласси те, вăл мĕнле çулпа утасси те. Исетерккĕри 8 ача амăшне Аслă Петрăн 1 степень орденне пани те аннесем кашни çыннăн пурнăçĕнче чи пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнни пирки калать. Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче хамăр ентешĕмĕр Н.В. Никольский йĕркеленĕ "Хыпар" хаçата никĕсленĕренне 100 çул çитнине, Йӳçкасси тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Ю. Скворцов 75 çул тултарнине паллă турăмăр. Юнкăпуçĕнче çуралнă чăвашсен пĕрремĕш писателĕ, историкĕ, этнографĕ С.М. Михайлов çуралнăранпа 185 çул çитрĕ. Унăн палăкне, музейне уçрăмăр. Çавăн пекех пирĕн ентеш-писательсем Кузьма Пайраш 100 çул, Кăтра Мишша 95 çул тултарнине паллă турăмăр. Асăннă мероприятисем çитĕнекен ăрава тăванлăх туйăмне упрамаллине, малашлăх истори çинче йĕркеленнине çирĕплетсе параççĕ. Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн мăшăрĕ Светлана Юрьевна пирĕн района Мускаври "Юрату тумламĕ" ушкăнпа килсе кайни те çĕр çинчи мĕн пур ырă ĕç чунлăхран, тăван вырăнсенчен пуçланнине кăтартса парать.

Иртнĕ çул вĕрентӳ учрежденийĕсенче иртекен пĕтĕм мероприяти вĕрентекенсен январьти канашлăвĕнче пăхса тухнă тема çинче никĕсленчĕ. Вĕсем шкул чăннипех те ăс-хакăлпа чун, культура аталанăвĕн центрĕ пулса тăнине çирĕплетрĕç. Тĕрлĕрен конкурссем воспитани, тăван анне, çĕршыв пĕлтерĕшне хаклама вĕрентрĕç. Калайкасси шкулĕнче районти çамрăксен форумне те Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕпе çыхăнтарчĕç. Район хаçатĕнче те, вырăнти радиовещани передачисенче те ăс-хакăлпа нравственность тĕлĕшĕнчен воспитани паракан материалсем пулсах тăчĕç. Районти хăш-пĕр шкулсенче православи культурине вĕрентессипе курссем те пулчĕç.

Районти культура учрежденийĕсем ирттерекен ĕçре те ăс-хакăлпа чун аталанăвĕ тĕп вырăнта пулчĕ. Акатуя та кăçал çак темăпах çыхăнтартăмăр. Чăваш халăхĕ вăл ĕлĕкех çут çанталăка аннене упранă пек упранă. Районти историпе краеведени музейĕнче йĕркеленĕ "Асамлă чĕнтĕр çипписем" выставкăри декоративлă прикладной искусство маçтăрĕсен ĕçĕсенче те çакă яр уççăнах курăнчĕ. "Тĕрĕ вылявĕнчи тăван кĕвĕсем" сурпансен куравĕ вара ЧР Президенчĕн грантне çĕнсе илчĕ. Депутатсен районти Пухăвĕнче 2006-2010 çулсенчи культура аталанăвĕн программине йышăнни те пирĕн ку тĕлĕшпе халиччен мĕн тунине сыхласа хăварса малалла аталантармаллине пĕлтерет.

Районти медицина учрежденийĕсенче те ЧР Президенчĕн Указне пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарчĕç хăйсен ĕçне. Сывă пурнăç йĕркипе калаçусем ирттернĕ, тĕрлĕ шкулсем ĕçлеççĕ.

Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче Каршлăхри А. Невскин Свято-Троицки мăнастирĕнче таса шыва кĕме кабинăсем тунă, юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Малашне кунти таса вырăнсене Дивеевăри пекех халăх ытларах килсе çӳремелли вырăн тăвас ĕмĕт пур.

Иртнĕ çул районта пурăнакансем ыр кăмăллăх акцийĕсене хутшăнса сахал тупăшлă çемьесене валли укçа-тенкĕ, япаласем пуçтарчĕç. Ваттисен çурчĕсенче ыр кăмăллăх концерчĕсем иртрĕç. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче республикăри салтак амăшĕсен комитечĕне пĕрле «вĕри точкăсенче» службăра тăракан салтаксен амăшĕсемпе тĕл пулу ирттерни те ыр кăмăллăх малти вырăнта иккенне кăтартса парать. Муркашри чиркĕвĕн никĕсне те ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче хывса хăвартăмăр, çуртне çĕклерĕмĕр.

Ăс-хакăл тирпейлĕхпе уйрăлми тачă çыхăннă. Çавăнпа та районта çулсеренех ялсене тирпей-илем кĕртессипе конкурс иртет.

Паллах, ăс-хакăл аталанăвĕ тавра курăм аталанăвĕпе пĕр çыхăра. Районта хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе те, çитĕнекен ăрава кĕнекене юратма вĕрентес ĕçе те яланах туса пымалла. Чи пахи кунта - çынсем малалла, лайăха турăнни. Ку вара пĕр çулталăклăх çеç пулмалла мар. Куллен чун-чĕре ыйтакан туртăм пултăр вăл. Районта пурăнакансем çакна лайăх ăнланаççĕ.

– 131 № Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе çулталăк çитрĕ. Хăйсен тивĕçĕсене ял тăрăхĕсем епле пурнăçласа пыраççĕха?

– Асăннă саккун вăя кĕнĕренпе малтан район шайĕнче татса панă ыйтусене вырăнсенче татса пама пуçларĕç. Малтанах çăмăлах пулмарĕ пулин те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем суйлавçăсен шанăçне тӳрре кăларассишĕн тимлени куçкĕретех. Паян ял тăрăхĕсем культура учрежденийĕсен ĕçне те йĕркелесе пыраççĕ, территорие хăт кĕртесси, урамсене электричество çути кĕртесси, пур çĕрсемпе пĕлсе усă курасси тата ытти те вĕсем çинчех.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем йывăрлăхсем умĕнче çухалса каймасăр ăнланатăп. Калăрăм ĕнтĕ, Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче пĕчĕк центр хута кайрĕ. Ярославка, Ярапайкасси, Атапай клубĕсен çивиттийĕсене улăштарнă. Халăха таса шывпа тивĕçтерессипе Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсем проектсем хатĕрлесе пĕтерчĕç, Москакасси, Ярославка, Хорнуй ял тăрăхĕсенче ку ĕç малалла пырать. Çĕнĕ урамсене çутă кĕртессипе те ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Пĕр çитменлĕхсемсĕр мар, паллах. Ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелессипе пуçарулларах пулмалла ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен. Ял тăрăхĕсен ĕçне вырăнти депутатсене активлăрах явăçтармалла. Ĕç опычĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ку тĕлĕшпе çулталăк хушшинче пуçтарăнчĕ. Çитес çул халăхпа пĕр-пĕрне ăнланса татах та хастартарах ĕçлессе шанас килет.

-Юрий Александрович, наци проекчĕсене пурнăçа кĕртесси районта епле пулса пырать-ха?

-"АПК аталантарасси" наци проекчĕ ял ĕçченĕсен пурнăçне те, йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ ял хуçалăх предприятийĕсен пурнăçне те çăмăллăхсем илсе килчĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесе çĕнĕ технологи çине куçмалла – акă мĕнле тĕллев пулмалла паян ял хуçалăх предприятийĕсен. Ку вара выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах туса илме, ял хуçалăхĕнчи кадрсен ыйтăвне татса пама та пулăшать. Районти 12 хуçалăх асăннă кредита илме проектсем хатĕрлесе пĕтерчĕç ĕнтĕ. Пурĕ 129 миллион тенкĕлĕх. Кăçал укçине илсе ĕçе пуçăнмалла пулать.

"АПК аталантарасси" наци проекчĕ çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма ялта пурăнакансене çăмăллатнă кредит илме майсем туса пачĕ. Пирĕн районта пурăнакансем 819 кредита пурĕ 120, 6 миллион тенкĕлĕх илнĕ. Ку вăл республикăра чи лайăх кăтартусенчен пĕри. Çавăн пекех 3 хресчен (фермер) хуçалăхĕ 4,2 миллион тенкĕлĕх кредит илнĕ.

"АПК аталантарасси" наци проекчĕ ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелеме те çулсем уçса пачĕ. Паянхи куна районта пурĕ 5 кооператива регистрациленĕ, 2 кооператив аккредитаци витĕр тухнă. Тепĕр кооператив регистрацилене документсем хатĕрлесе çитерчĕ. Кăçал ку тĕлĕшпе тата та тăрăшса ĕçлемелле.

"Вĕрентӳ" наци проекчĕ те вĕрентӳпе воспитани ĕçне çӳллĕрех шая çĕклеме май пачĕ. Районта 10 база шкулĕ (вĕсенчен 3-шĕ – ресурс центрĕсем). Унта 10 шкул автобусĕ ачасене турттарать.

Вĕрентӳ пахалăхĕ те çулсеренех ӳссе пырать. Çакна пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем те çирĕплетсе пачĕç. Ку тĕлĕшпе Муркаш лицейĕ, Нискасси шкулĕ чи лайăх результатсем кăтартрĕç.

Асăннă наци проекчĕ шкулсемпе педагогсене çĕнĕлле ĕçлеме хавхалантарса пырать. Муркаш лицейĕ РФ грантне – 1 миллион тенкĕне, Калайкасси шкулĕ ЧР Президенчĕн грантне – 200 пин тенкĕне илме тивĕç пулчĕç. Тепĕр 5 шкул район пуçлăхĕн грантне – 20-шер пин тенкĕ илчĕ. Уйрăм педагогсем те асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пысăк чыса тивĕçрĕç. Турай шкулĕнчи А.Ю. Герасимова, Москакасси шкулĕнчи С.Ф. Желтова, Калайкасси шкулĕнчи В.Т. Моисеев РФ Президенчĕн парнине – 100 пин тенкĕне, Муркаш шкулĕнчи В.В. Смирнова ЧР Президенчĕн грантне – 10 пин тенкĕне тивĕçрĕç. Тепĕр 20 вĕрентекен район пуçлăхĕн грантне – 5-шер пин тенкĕ илме тивĕç пулчĕ. Районти 17 маттур çамрăк ЧР Президенчĕн, 100 вĕренекен район пуçлăхĕн стипендине илсе тăчĕ. "Вĕрентӳ" наци проекчĕ çавăн пекех воспитани ĕçĕ вĕрентӳ ĕçĕнчен кая маррине кăтартса пачĕ. Районти 337 класс ертӳçине ĕç укçине ӳстерсе панă.

"Сывлăх" наци проекчĕ те района нумай ырă улшăну илсе кĕчĕ. Пĕр сăмахпа каласан, халăх сывлăхне сиплес ĕç палăрмаллах улшăнчĕ. Чи малтанах пуçламăш сыпăкра медицинăпа санитари пулăшăвĕ парасси лайăхланчĕ. Йывăр çын-хĕрарăмсемпе ача çуратакан хĕрарăмсене паракан сертификатсем пурнăçа кĕчĕç. В гепатитран, хĕрлĕ шатраран, полимиелитран тата грипран прививкăсем тунă. 35-55 çулсенчи çынсене хушма диспансеризаци, сывлăхшăн хăрушă тата сиенлĕ вырăнта ĕçлекенсене хушма медосмотр витĕр кăларнă. Асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн районти медицина учрежденийĕсене диагностика оборудованийĕ тата "Васкавлă пулăшу" машинисем пурĕ 5 миллион ытла тенкĕлĕх килнĕ.

Тепĕр наци проекчĕ вăл – "Граждансене меллĕ тата хăтлă çурт-йĕр". Вăл ялта пурăнакансемпе çамрăк специалистсене хваттерлĕ, çурт-йĕрлĕ пулма пулăшать. Çӳлерех асăнтăм ĕнтĕ, асăннă категорисене "Яла 2010 çулччен социаллă аталантарасси" программăпа хваттерсемпе тивĕçтересси малалла пырать. "Граждансене – меллĕ тата хăтлă çурт-йĕр" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн вара кăçал пулăшу илме 8 çемье пĕлтĕр ЧР Хула строительствин тата обществăлла инфраструктура министерствине документсем хатĕрлесе пачĕç ĕнтĕ.

Çакă савăнтарать: наци проекчĕсем пĕр çуллăх çеç мар, апла пулсан çитес çул татах та ырă улшăнусем нумай пулĕç.

– Çитес çулхи тĕллевсем, задачăсем пирки калаçни те ытлашши пулмасть пулĕ.

– 2006 çула пĕтĕмлетсе çакна каламалла: умра çĕнĕ плансем, тĕллевсем. Каларăм ĕнтĕ, çакна районăн 2007 çулхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн прогнозĕнче палăртса хăвартăмăр. Районăн 2007 çулхи бюджетне те йышăннă. Ял хуçалăхĕнче çĕнĕ технологи çине куçмалла. Производствăна çынсен ресурсĕсем çитмен чухне те йĕркеллĕ тытса пыма май паччăр вĕсем. Вăл е ку продукцие туса илессипе специализациленесси çине хăюллăрах пăхмалла.

Промышленноçра та продукци пахалăхне лайăхлатмалли, вăя перекетлеме май паракан технологипе çине тăрарах ĕçлемелле.

Çĕнĕ 2007 çулта обществăлла инфраструктурăна малалла аталантарассипе, çулсем тăвассипе, халăха ĕçмелли таса шывпа тивĕçтерессипе тата тăрăшарах тимлемелле. Наци проекчĕсене малалла пурнăçа кĕртессипе ĕçлемелле. Мĕн палăртнине пурнăçласси вара район администрацийĕ, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, пĕтĕм халăх пĕрле пĕр тĕллевпе ĕçленинчен килет. Çапла пултăр тесе тăрăшăпăр.

Сăмаха вĕçлесе пынă май пурне те Çĕнĕ 2007 çул тата çывхарса килекен Христос çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Пурсăра та çĕнĕ çулта çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. 2007 çула ЧР Президенчĕ Ачасен çулталăкĕ тесе палăртнă май хамăрăн ачасемшĕн, хамăр пуласлăхшăн хамăртан килнине йăлтах тăвасчĕ.

– Юрий Александрович, Сире те Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, çăмăл мар явăплă ĕçре ăнăçусем сунатпăр.

Юбилей

Саламлатпăр

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Торинкассинче пурăнакан юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, хуньстарике, асаттене – **Александр Данилович СЕМЕНОВА** 60 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ ĕç ĕмĕрĕпех К.Иванов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче механизаторта ĕçлесе çĕршер гектар тырă акни, вуншар çул вырмара вăй хуни, аннепе пĕрле 5 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларни, паян та алă усса ларманни – пирĕншĕн пысăк тĕслĕх. Хастарлăхупа ăшă кăмăлна мăнукусен савăк сассин ытамĕнче татах вуншар çул упраса пурăнма ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Эсĕ яланах пире пулăшса пынишĕн тата пурнăçунта сад ĕçне кăмăлланишĕн паян пĕрле савăнатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, 8 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.

Юратнăран та юратнă аннене, тараватлă кукамая, хаклă асаннене – Исетерккĕ ялĕнче пурăнакан **Вера Никитична ЕГОРОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Утас кунçулу яланах такăр пултăр, ĕмĕтĕрсем пурнăçланса пыччăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.

Список
граждан, подлежащих включению в общий список кандидатов в присяжные заседатели Моргаушского района Чувашской Республики, утвержденного распоряжением Президента Чувашской Республики от 22.12.2006 г. № 152-рп

1. Александрова Луиза Ивановна
2. Алексеев Анатолий Иванович
3. Алексеев Юрий Иванович
4. Быкова Регина Петровна
5. Васильева Валентина Викторовна
6. Вишнева Людмила Николаевна
7. Воробьев Петр Васильевич
8. Иванов Виталий Александрович
9. Иванов Виталий Гурьевич
10. Иванов Виталий Иванович
11. Иванова Альбина Владимировна
12. Иванщикова Юлия Степановна
13. Кадыкова Эльвира Николаевна
14. Киршева Надежда Геннадьевна
15. Кроль Алексей Юрьевич
16. Лаптева Зоя Ивановна
17. Матвеева Фаина Аркадьевна
18. Мерлова Галина Германовна
19. Михайлова Нина Александровна
20. Морозов Александр Евстафьевич
21. Морозова Людмила Васильевна
22. Налимова Елена Ивановна
23. Николаева Валентина Никодимовна
24. Орлов Евгений Витальевич
25. Павлов Григорий Аркадьевич
26. Сарилов Михаил Валентинович
27. Степанова Алина Николаевна
28. Столяров Михаил Аркадьевич
29. Столярова Любовь Геннадьевна
30. Троицкая Светлана Вениаминовна
31. Федорова Людмила Геннадьевна
32. Федорова Светлана Васильевна
33. Хлебников Владимир Леонидович
34. Чебенова Ангелина Николаевна
35. Шенчелова София Дмитриевна
36. Ярухин Константин Федорович

Юратнăран та юратнă аттепе аннене, асаттепе асаннене, кукаçипе кукамая – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Валерий Филиппович ИВАНОВА** 65 çулхи, **Светлана Ниловна ИВАНОВАНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, телейлĕ кун-çул сунатпăр. Ял-йыш яланах сума сутăр, ачусенчен пархатар курмалла пултăр, мăнукусен савăнăçлă сасси кун-çула илем кӳтĕр сирĕнне.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ултă мăнукĕ, хăтипе тăхлачисем, тăванĕсем.

Муркашра пурăнакан хĕрĕме, юратнăран та юратнă аннене, мăшăра, ыр кăмăллă хунямана, тараватлă кукамая хаклăран та хаклă йăмăка – **Галина Аверкиевна ГОРДЕЕВАНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Кĕркуннехи пек тулăх пултăр ĕмĕрӳ,
Чир мĕнне пачах ан пĕлтĕр çывлăху,
Тату пултăр ĕмĕр пурнăçу,
Такăр пултăр яланах çулу.
Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма ялан вăй-хал парать.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, 2 хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕ, аппăшĕ, Соловьевсен тата Столяровсен çемйисем.

Шаптак Муркашра çуралса ӳснĕ тата кунтах çемье çавăрса пĕр ывăлпа тăватă хĕр çуратса ӳстернĕ, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра нумай çул выльăх пăхнă çĕрте ĕçленĕ юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, çывăх тăвана – **Александра Ивановна НИКИТИНАНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр татах нумай çул пире савăнтарса пурăнма сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Ăшпиллĕ сăмахсем çавăн пекех унăн мăшăрĕн, пирĕн аттепе асаттен, хуньстарикăн Виталий Васильевич Никитинăн тата вĕсен кĕçĕн хĕрĕпе Людăпа икĕ мăнукĕн Катьăпа Иринăн ячĕсемпе те. Вĕсен те кăрлач уйăхĕнче çуралнă кунĕсем. Ăнăçупа телей пултăр пурне те вĕсене çак Çĕнĕ çулта.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 8 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.